# 2008 çулта республикăн тĕп праçникĕ Йĕпреç районĕнче те иртет


Йĕпреç районĕн хаçачĕ

# ÇĔНТЕРŸШĔН

Шăматкун
2007 юпа, 13

82 /8999/№

Хаçат 1932 çултанпа тухса тăрать

Хакĕ ирĕклĕ
электронлă адрес:
ibresi@press.cap.ru


ПРАВИТЕЛЬСТВĂРА

## ХУЛАСЕНЧЕ ÇĔНĔ ÇУЛСЕМ ТУМАЛЛА

Николай Федоров Президент юнкун Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн ларăвне ирттернĕ. Ăна уçнă май вăл çакна палăртрĕ: урамсемпе иртнĕ чухне кашниех асăрхать пулĕ, вĕсем чылай çĕрте автомобильсемпе тулса ларнă. Республикăра «автомобилизаци» пысăк хăвăртлăхпа аталанать. Кунпа пĕрлех пурăнмалли çурт-йĕр строительстви анлăн сарăлса пырать. Кун пек лару-тăрура транспорт инфратытăмĕ, уйрăмах Шупашкарта, çывăх вăхăтра тата ытларах йывăрлăха лекме пултарать.

Çавна май Президент «Хула округсенче урамсемпе çулсен сетьне пысăк хăвăртлăхпа аталантарасси çинчен» Указ йышăннă. Документ çĕнĕ çулсем, кĕперсем, транспорта чăрмавсăр иртсе çӳремелли вырăнсем тăвассине республика тĕп хулинче кăна мар, ытти хулара та çĕнĕ вăйпа пурнăçламалли майсене палăртать. Урам-çул инфратытăма малалла лайăхлатмалли ĕçсене республика шайĕнче пурнăçлама, укçа-тенкĕпе тивĕçтерме Министрсен Кабинетне хушнă. Унăн, вăхăта пĕр кун тăсмасăр, ытти документа хатĕрлесе хуласен, Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар, Улатăр, Канаш хула администрацийĕсемпе килĕшсе çирĕплетмелле, пĕрлехи программăна пурнăçа кĕртме тытăнмалла.

Президентăн тепĕр Указĕпе килĕшӳллĕн республика конкурсĕн кăтартăвĕсем тăрăх 2008 çулта Республика кунне Шупашкар хулисĕр пуçне тата икĕ муниципалитет районĕнче – Йĕпреçпе Муркаш районĕсен территорийĕсенче ирттерĕççĕ. Вĕсем çак чыса çĕнсе илессишĕн нумай тăрăшнă.

Правительство ларăвĕ Чăваш Республикин «Чăваш Республикин 2008 çулхи тата планпа пăхнă 2009, 2010 çулсенчи тапхăрти республика бюджечĕ çинчен» саккунне пурнăçламалли мерăсене пăхса тухрĕ.

Виçĕ çуллăх бюджет экономикăна аталантармалли тĕп документ, вăл финанс, налук, бюджет политикинче паллă вырăн йышăнать, пĕтĕм ĕçсен результачĕ пулса тăрать. Чăваш Енре юлашки çулсенче экономика çирĕп аталанать. Çакă – виçĕ çуллăх бюджета палăртмалли çирĕп никĕс.

2008-2010 çулсенчи бюджет тĕллевĕ –халăхăн укçа-тенкĕ тупăшне малалла ӳстересси. Бюджет тытăмĕнче ĕçлекенсен шалăвĕ çак тапхăрта 2 хут ӳсмелле (Раççейре – 1,5 хут), 2010 çулта ĕç укçи ӳсĕмĕ инфляци шайĕнчен 5 хута яхăн пысăкрах пулмалла. Халăхăн социаллă хӳтлĕхĕ, вĕрентӳ, сывлăх сыхлавĕ, культура валли бюджет тăкакĕсене нумай ӳстерĕççĕ. Виçĕ çуллăх бюджетра республикăри мĕн пур яла хытарса тунă çул-йĕрпе çыхăнтарма, физкультурăпа сиплев комплексĕсем туса çитерме, халăха ĕçмелли таса шывпа тивĕçтерме палăртнă. Пурăнмалли çурт-йĕр строительствин программине малалла пурнăçлаççĕ, агропромышленноç комплексне пулăшаççĕ.

Лару республика экономикипе социаллă пурнăç аталанăвĕн ытти чылай ыйтăвне сӳтсе яврĕ.

ВЫБОРЫ — 2007

## ВЫДАЮТСЯ ОТКРЕПИТЕЛЬНЫЕ УДОСТОВЕРЕНИЯ

2 декабря 2007 года состоятся выборы депутатов Государственной Думы Федерального Собрания Россий-ской Федерации пятого созыва. На территории района постановлением Главы Ибресинского района образованы 29 избирательных участков для проведения голосования и подсчета голосов избирателей. Гражданин Российской Федерации, достигший на день голосования 18 лет, имеет право избирать депутатов Государственной Думы. Если Вы, уважаемые избиратели, не будете иметь возможность прибыть в день голосования на свой избирательный участок, где включены в список избирателей, по причине выезда на работу, учебу, лечение и т.д., вправе заранее получить открепительное удостоверение. Начиная с 17 октября по 10 ноября сего года открепительное удостоверение выдает Ибресинская территориальная избирательная комиссия, которая расположена в здании администрации Ибресинского района на I этаже, кабинет №112. А с 11 ноября по 1 декабря открепительное удостоверение выдают участковые избирательные комиссии. В день голосования Вы можете прибыть в любой избирательный участок на территории Российской Федерации и, предъявив в избирательную комиссию открепительное удостоверение и паспорт, принять участие в голосовании.

При получении открепительного удостоверения надо предъявить паспорт или заменяющий его документ. Избирательная комиссия на основании письменного заявления избирателя с указанием причины выдает открепительное удостоверение лично избирателю, либо его представителю на основании нотариально удостоверенной доверенности.

***ИБРЕСИНСКАЯ ТЕРРИТОРИАЛЬНАЯ ИЗБИРАТЕЛЬНАЯ КОМИССИЯ.***

## РЕШЕНИЕ ИБРЕСИНСКОЙ ТЕРРИТОРИАЛЬНОЙ ИЗБИРАТЕЛЬНОЙ КОМИССИИ

### О СРОКЕ ПРИЕМА ПРЕДЛОЖЕНИЙ О КАНДИДАТУРАХ В СОСТАВ УЧАСТКОВЫХ ИЗБИРАТЕЛЬНЫХ КОМИССИЙ

В соответствии со статьей 21 п.3 Федерального закона «О сроке приема предложений по составу участковой избирательной комиссии не может быть менее 15 дней. Сообщение о формировании участковых избирательных комиссий и сроке приема предложений по кандидатурам в их состав подлежит опубликованию (обнародованию) до начала приема указанных предложений» Ибресинская территориальная избирательная комиссия р е ш и л а:

Установить сроки приема заявлений о кандидатурах в состав участковых избирательных комиссий от: политических партий; общественных объединений; представительного органа муниципального образования; собрания избирателей по месту работы, жительства, учебы с 14 по 29 октября.

***Председатель Ибресинской ТИК***
***В. ГОРДЕЕВ.***

п. Ибреси, 9 октября 2007 г., №8/2-II.

## КАНДИДАТЫ ЗАРЕГИСТРИРОВАНЫ

9 октября 2007 года Ибресинская территориальная избирательная комиссия зарегистрировала кандидатов в депутаты:

- Собрания депутатов Хормалинского сельского поселения по избирательному округу №8 – ГРИГОРЬЕВА Алексея Алексеевича, водителя автобазы связи, ИВАНОВА Федора Васильевича, водителя СПК «Патман»;
- Собрания депутатов Андреевского сельского поселения по избирательному округу №6 – ИСАКОВУ Дину Вячеславовну (временно не работает), СЕМЕНОВУ Александру Николаевну, пенсионерку.

***В. ГОРДЕЕВ,***
***председатель Ибресинской ТИК.***

## *Чăваш Республикин Президенчĕн УКАЗĔ*

### Чăваш Республикинчи хула округĕсен урамсемпе çул-йĕр сетьне хăвăрт аталантарасси çинчен

Чăваш Республикинчи хула округĕсен социаллă пурнăçпа экономикăн çирĕп аталанăвне тивĕçтерес тата халăхăн пурнăçпа ĕç-хĕл условийĕсене лайăхлатас тĕллевпе çапла йышăнатăп:

1. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн çапла тумалла:

Чăваш Республикинчи хула округĕсен администрацийĕсене явăçтарса 2008 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕччен республикăн пĕрле укçа-тенкĕ уйăрмалли условисемпе хуласен урамсемпе çул-йĕр сечĕсене хăвăртрах аталантармалли тĕллевлĕ программине хатĕрлемелле тата йышăнмалла;

Чăваш Республикинчи хула округĕсен урамсемпе çул-йĕр сетьне аталантарма хушма инвестицисем явăçтарассине тивĕçтермелле.

2. Шупашкар хулин урамĕсенчи транспорт юхăмне палăрмаллах чакарассине, Чăваш Республикинчи районсемпе тĕп хула хушшинчи, çав шутра унăн истори центрне çитмелли çулсен майĕсене тата çыхăну хăвăртлăхне пысăклатмалли тĕп магистральсене çитес икĕ çул хушшинче тумаллине çирĕплетес.

3. Çапла сĕнес:

Шупашкар хулин администрацийĕн Чăваш Республикин тĕп хулин инвестицисемпе тата экономикăпа çыхăннă малалли çирĕп аталанăвне тивĕçтерме кирлĕ урамсемпе çул-йĕр сечĕсене маларах аталантармалline шута илсе Шупашкар хулин Генеральнăй планне палăртнă йĕркепе улшăнусем кĕртмелле;

хуласен округĕсен администрацийĕсен кĕске вăхăтра çулсен строительствипе юсавĕн проектпа смета документацине хатĕрлемелле, çак Указа пурнăçлассипе çыхăннă ытти йĕркелӳ мероприятине пурнăçа кĕртмелле.

4. Çак Указ ăна официаллă майпа пичетлесе кăларнă кунран вăя кĕрет.

***Чăваш Республикин Президенчĕ***
***Н. ФЕДОРОВ.***

Шупашкар, 2007, юпа 10, 87 №.

## РЕСПУБЛИКА ПРЕЗИДЕНЧĔ Н. ФЕДОРОВ МИНИСТРСЕН КАБИНЕЧĔН 2007 ÇУЛХИ ЮПА УЙĂХĔН 10-МĔШĔНЧИ ЛАРĂВĔНЧЕ ТУХСА КАЛАНИНЧЕН

Хисеплĕ ĕçтешсем! Сиртен кашниех статистикăсăрах, пурнăçра, урамсенче курать пуль: халăх автомобильсем ытларах та ытларах туяннă, çĕнĕ стройкăсем нумайланнă май Шупашкар хулин транспорт инфратытăмĕ йышăнакан мерăсене пăхмасăр çитес çулсенче пысăк хулан паянхи требованийĕсене тивĕçтереймĕ.

Транспортпа çыхăннă çивĕч ыйтăва, уйрăмах республикăн тĕп хулинче, хăвăртрах çĕнĕ çулсемпе кĕперсем туса татăклăн татса памалла. Малашлăха пăхса çывăх пуласлăх пирки шутласан вара ку тема Чăваш Енри мĕн пур хулашăн çивĕч.

Халăхăн укçа тупăшĕ ӳсни абстракци мар ĕнтĕ. Чăнлăх çакăн пек: юлашки 10 çул хушшинче республикăри уйрăм çынсен автомобилĕсен шучĕ 10 хут ытла ӳснĕ.

Ку хальхи автоçулсем çине лекекен тиеве палăрмаллах пысăклатать, çакна урамсенче «пăкăсем» нумайланни те кăтартать. Шупашкар администрацийĕ республика ертӳçисемпе пĕрле хула трассисене реконструкцилес енĕпе çине тăрсах мерăсем йышăнать пулин те, транспорт юхăмĕсем паянхи хăвăртлăхпа ӳссе пынине шута илсен ку çителĕксĕр.

Çавна май эпĕ хула округĕсен урамсемпе çул-йĕр сетьне хăвăртрах аталантарасси çинчен калакан ятарлă Указа алă пусрăм, унпа килĕшӳллĕн Чăваш Енĕн тĕп хулинче те, ытти хулара та (ял тăрăхĕсенче тивĕçлĕ Указ пурнăçлать ĕнтĕ) çĕнĕ çулсем, кĕперсем, транспорт çӳревне çăмăллатмалли ытти майсем тăвассине çĕнĕ хăват памалла, çавăн пекех Министрсен Кабинечĕ çул-йĕр инфратытăмĕн малалли аталанăвне укçа-тенкĕпе хутшăнассине палăртнă.

## ХИСЕП ГРАМОТИПЕ НАГРАДĂЛАНĂ

Халăх сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе нумай çул тӳрĕ кăмăлпа ĕçленĕшĕн «Йĕпреç районĕн тĕп больници» сывлăх сыхлавĕн муниципалитет учрежденийĕн анестезиологипе интенсивлă терапи уйрăмĕн медицина сестрине-анестезиологне Людмила Николаевна ВОЛКОВАНА Йĕпреç районĕн Хисеп грамотипе наградăланă.



Ноутбук Acer — 17850 рублей

НИ КОМПЬЮ СУПЕРМ

ПОДАРОК - ПРИ ПОКУПКЕ КОМПЬЮТЕРА

п. Ибреси, ул. Садовая, д. 7 /Дом быта/, 2 этаж, телефон: 2-22-62.
КРЕДИТ
www.nix.ru

**Республикăри перинаталь центрне 2001 çулта амăшĕсемпе ачалăха сыхлас ĕçĕн патшалăх политикине вăйлатас тĕллевпе тунă. Çак тапхăрта вăл Амăшĕн, ача сывлăхĕн чăн-чăн керменĕ пулса тăчĕ. Çакна Владимир Путин Чăваш Ене ĕçлĕ çӳревпе килсен хăй курса ĕненчĕ.**



# ÇЕМЬЕНЕ ПЛАНЛАССИН МАЛАШЛĂХĔСЕМ

Центр патне çитеспе Владимир Путин тĕп алăк умĕнчех тăракан реанимобиле асăрханă. Чĕннĕ çĕре васкавлăн тухса каймалла хатĕр тăнă вăл. «Сывлăх» наци проекчĕн рамкисемпе килĕшӳллĕн центр тин çуралнă ачасем валли çакăн пек икĕ реанимобиль илнĕ. Вĕсемпе республикăн пур кĕтесĕнчен те йывăр çуралнă ачасене çакăнта илсе килеççĕ, вĕсене транспорт инкубаторĕсемпе, ӳпкене искусственнăй майпа сывлаттармалли аппаратсемпе, кислород баллонĕсемпе тивĕçтернĕ.

ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министрĕ Нина Суслонова патшалăх ертӳçине республикăра амăшĕсемпе ачасене пулăшу памалли мерăсем, çавăн пекех ача йывăр çуратакан хĕрарăмсене кӳрекен пулăшун виçĕ шайлă тытăмĕ çинчен каласа панă. Вăл каланă тăрăх, ача çуратма хатĕрленнĕ тапхăртан пуçласа палăртнă виçерен тухса çуралакан ачасемшĕн тимлесси таранах медицина пулăшăвĕ параççĕ.

Çакнашкал меслетпе тимленин усси куçкĕретех. Вăхăт çитмесĕрех çуралакан ачасен йышĕ 15 процент, хырăм пăрахасси те чакнă, кăçалхи 7 уйăхра вара пĕчĕк ачасен вилеслĕхĕ шайĕпе эпир Европа кăтартăвĕпе танлашнă. Иртнĕ çулта республикăри чи пысăк 3 хулара çуралнă ачасен йышĕ вилекен çынсенчен ытларах пулнă.

«Сывлăх сыхлавĕ» наци проектне пурнăçа кĕртсе пынă май, 2006 тата 2007 çулсенче республикăна 1 миллиард тенкĕ укçа килнĕ, травматологипе ортопедин тата эндопротезăн федераллă центрне тунине шута хурсан, ку çул вĕçленнĕ тĕле çак виçе 4 миллиард тенкĕрен те иртмелле. Тăватă çул хушшинче сывлăх сыхлавĕн бюджечĕ, наци проектне тата сывлăх сыхлавĕн пахалăхĕн пилотлă проектне тĕпе хурсан Чăваш Енре 4 хут, 7 çул хушшинче 8 хут таранах ӳснĕ.

Приоритетлă проекта пурнăçа кĕртме муниципалитетăн 42 медицина учреждениййĕ хутшăнать. 2006-2007 ç.ç. республикăна 319,5миллион тенкĕлĕх диагностика оборудованиййĕ килнĕ. Çав тапхăрта республикăра нацпроект рамкисемпе «Васкавлă медпулăшун» 159 автомашинине тата МБРР проекчĕпе 92 автомобиль туяннă.

Профилактика ĕçне пысăк тимлĕх хураççĕ. Иртнĕ çулта бюджет тытăмĕнчи 16 пин ытла, сиенлĕ производствăра ĕçлекен çавăн чухлех çын диспансер тĕрĕслевĕнче пулнă. Кăçал вара бюджет тытăмĕнчи 52 пин, сиенлĕ производствăра тăрăшакан 29 пин çын диспансеризаци витĕр тухнă.

Патшалăх ертӳçи перинаталь центрĕн тĕп врачĕпе Алла Самойловапа пĕрле уйрăм пӳлĕмсене кĕрсе курнă. Пулас амăшĕсемпе ашшĕсен шкулĕ ăна уйрăмах килĕшнĕ. Владимир Путин пулас амăшĕсем ача çуратма хатĕрленнипе тата хăйсен «тĕпренчĕкĕсене» воспитани парассине мĕнлерех йĕркелеме шутланипе чунтанах интересленнĕ. Ача çуратма хатĕрленекенсемпе калаçнă чухне Президент патшалăх ача çуратма хатĕрленекен çемьесене тивĕçлĕ условисем туса парассишĕн тăрăшнине палăртнă. Ача çуратакансем хăйсем те патшалăх ертӳçине перинаталь центрĕнче ачана шанчăклăнах çуратма май паракан кирлĕ условисем туни çинчен пĕлтернĕ. Пулас амăшĕсене Владимир Путин вĕсемпе чей ĕçсе ларнă чухне ытларах калаçма вăхăт тупайманшăн кăна пăшăрханни çинчен пĕлтернĕ.

Хĕрарăмсемпе калаçнă хыççăн патшалăх ертӳçи вăхăтсăр çуралнă ачасене тытмалли инкубатора çитсе курнă. Ку уйрăма хальхи йышши оборудовани вырнаçтарнă, çакă вара кунта 500 грамм таякан ачасене усрама та майсем парать. Паллах, ку техника пĕрре те йӳнĕ мар, приоритетлă наци проектне пула ĕнтĕ ăна центра валли кӳрсе килме пултарнă.

УЗИ пӳлĕмĕнче Антонина Кожевникова врач Президента ультрасасса тĕпчекен аппарат 5 миллион ытла тенкĕ тăни, ăна наци проекчĕн рамкисемпе килĕшӳллĕн туянни, вăл пулăшнипе чĕре чирĕсене малтанхи тапхăртах тупса палăртма май килни çинчен каласа панă.

Пациентсен шăписемшĕн пăшăрханакан медиксем патшалăх ертӳçине оборудовани, уйрăмах сывламалли аппаратсем çав-çавах çителĕксĕр пулни çинчен пăшăрханса пĕлтернĕ. Çĕршыв Президенчĕ, приоритетлă наци проектне пурнăçа кĕртсе пынă май, çавна шута илме шантарнă.

Центрти медицина персоналĕпе демографи политики çинчен калаçнă май, Владимир Путин акă мĕн палăртнă: «Эпир иккĕмĕш тата ун хыççăн ача çуратнăшăн пулăшмалли вăчăра туса хатĕрлерĕмĕр. Анчах та çакă та, паллах, тĕп хавхалану пулса тăраймĕ. Ача çуратасси вăл кашни çыннăн чунчĕре хистевĕ пулмалла. Планлас ĕçĕн пысăк малашĕсем кирлĕ, çемье мĕн çине таянмаллине пĕлсе тăтăр».

«Наци проекчĕн рамкисенче эпир сирĕнпе мĕн туни вăл – обществăпа патшалăхăн шанчăклă «çуртне» тума май паракан никĕсе хунă кирпĕчсенчен пĕри», – шанăçлăн пĕлтернĕ патшалăх ертӳçи.

Владимир Путин центр паракан çăмăллăхсемшĕн тата юлашки 5 çул хушшинче тунă ӳсĕмсемшĕн питех те савăннă. Алла Самойлова пĕлтернĕ тăрăх, республикăра сывлăх сыхлавĕн тытăмне комплекслăн çĕнетессине федераци проекчĕ çула тухиччченех, 1994 çултах тытăннă, çакă сывлăх сыхлавĕн тытăмĕнче тунă ырă çитĕнӳсен никĕсĕ пулса тăрать.

***О. ИЛЬИНСКАЯ.***



## СЫВЛĂХ КУНĔ

Йĕпреçри 1-мĕш номерлĕ вăтам шкулта кĕрхи кросс ирттересси йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. Ытти чухнехи пекех кăçал та вăл район центрĕнчи культурăпа кану паркĕнче иртрĕ. Ку хутĕнче вăл Сывлăх кунĕпе тĕл килчĕ.

Кунĕ хĕвеллĕ те ăшă тăчĕ, çавăнпах пулĕ ăмăртăва хутшăнма хатĕрленнĕ ачасен кăмăлĕсем уçă, хаваслă.

Парка пысăк ушкăнпа пырса кĕтĕмĕр. Чи малтанах кунта линейка иртрĕ, кросс йĕркипе паллашрăмăр. Хĕрачасен пĕр çухрăма, арçын ачасен икĕ çухрăма чупса тухмалла.

Пиллĕкмĕш класра вĕренекен хĕрачасен ушкăнĕ старта чи малтан тухрĕ. Вĕсем дистанцие çăмăллăнах парăнтарчĕç. Ытти класенчи хĕрачасем те маттур, кашниех финиша чи малтан çитессишĕн кĕрешрĕ: çĕнтерӳ кама илĕртмĕ ĕнтĕ!

Кăтартусене пĕтĕмлетнĕ хыççăн судьясен коллегийĕ хĕрачасен хушшинче чи лайăх çăмăл атлетсене палăртрĕ. Вĕсем çаксем: Ольга Жарская (5-мĕш «б» класс), Анастасия Григорьева (7-мĕш «б»), Татьяна Федорова (9-мĕш «а»), Екатерина Марушева (10-мĕш «г»). Арçын ачасем хушшинче Евгений Ястребов (5-мĕш «б» класс), Дмитрий Иванов (7-мĕш «б»), Андрей Мамонтов (9-мĕш «а» класс), Денис Савинов ( 11-мĕш «г» класс) палăрчĕç.

Çĕнтерӳçĕсен йышне кĕрейменнисем те кăмăлĕсене хуçмарĕç. Чи кирли çĕнтерӳ мар, туслă ăмăртăва хутшăнни мĕне тăрать!

Спорт вăл – сывлăх та, лайăх кану та. Туслашăр унпа, юлташсем!

***Ксения СЕРГЕЕВА, Йĕпреçри 1-мĕш вăтам шкул, 10-мĕш «л» класс.***

# «ПИРĔН ХУЛА», «ПИРĔН АТТЕ-АННЕ»: СОЦИАЛЛĂ ПРОЕКТСЕН КОНКУРСĔН МАЛТАНХИ ИТОГĔСЕМ

Чăваш Ен «Пирĕн хула», «Пирĕн атте-анне» социаллă проектсен конкурсне хутшăнма заявкăсем тăратассипе малта пыракан регионсен спискне кĕчĕ. Аса илтеретпĕр, çак конкурссене иккĕмĕш çул ĕнтĕ вырăнти хăйтытăмлăхăн Пĕтĕм Раççейри канашĕпе Раççейри пенсионерсен Союзĕ, «Культура тата право» пĕтĕм Раççейри обществăлла организаципе пĕрле, «Пĕрлĕхлĕ Раççей» («Единая Россия») парти информациллĕ пулăшу панипе ирттереççĕ.

Юпа уйăхĕн 8-мĕшĕ тĕлне пирĕн республикăран 70 заявка тăратнă. Çак йышран 50-шĕ «Пирĕн хула» конкурса, тепĕр 20-шĕ «Пирĕн атте-анне» конкурса. Çакна та аса илтерер, конкурссене муниципаллă, обществăллă мĕнпур организацисем кăна мар, уйрăм çынсем те хутшăнма пултараççĕ.

Малтан шутланă пекех, иртнĕ çулти çĕнтерӳçĕсем çак конкурссене активлăн хутшăнчĕç. Шупашкарти «Салют» культура керменĕнче кунти коллектив иртнĕ çул çĕнсе илнĕ грант пулăшăвĕпе усă курса пенсионерсем валли кану центрĕ уçăлчĕ, хăйĕн проектне культура керменĕ халĕ малалла аталантарать. Хальхи вăхăтра çак культура керменĕ эксперт комиссине «Пирĕн атте-анне» конкурса çĕнĕ виçĕ тĕрлĕ ĕç тăратрĕ. Вĕсенчен пĕри ватă çынсен хушшинче илемлĕх конкурсне ирттерессипе, тепри ветерансем валли компьютер ликбезне йĕркелессипе, виççĕмĕшĕ инвалидсене социаллă адаптаци памалли центра уçассипе çыхăннă.

Пĕтĕмĕшле илсен, ветерансене, инвалидсене, çамрăксене компьютер пĕлĕвĕ парасси çинчен çырнă конкурс ĕçĕсем чылай. Ку вăл ахальтен мар, Чăваш Ене темиçе çул каялла кăна-ха Атăлçи округĕн «Электронлă тĕп хули» тесе ят пачĕç. Республикăра компьютеризаци активлăн аталанать. Интернет, мобильлĕ çыхăну вăй илчĕ, модельлĕ библиотекăсем уçăлаççĕ, Чăваш Енри мĕнпур шкулсем пĕрлехи информаци сечĕпе çыхăннă.

Инвалидсен обществин Пĕтĕм Раççейри организацийĕ хăйĕн членĕсене компьютер пĕлӳлĕхне парассипе ĕçлеме палăртать. Иртнĕ çул унăн инвалидсене физкультурăпа тата сывă пурнăç йĕркипе реабилитацилес енĕпе туса хатĕрленĕ проекчĕ çĕнтерӳçĕсен йышне лекнĕччĕ. Раççейри пенсионерсен Союзĕ тăрăшнипе Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар, Канаш хулисенче ватă çынсене компьютер пĕлĕвĕ паракан клубсем уçăлнă.

Канаш районĕнчи Асхва ялĕн халăх промыслисене аталантарас темăпа çырнă проекта та, Шупашкарти 60-мĕш номерлĕ шкулта этнографи музейне туса хурассине тĕпе хунă проектра та авторсем хальхи вăхăтри компьютер технологийĕсемпе усă курассине ĕçе кĕртме сĕнеççĕ.

Вĕренӳ заведенийĕсем те йышлă заявка панă. Шупашкар хулинчен кăна 17 шкул (çав шутра 1-мĕшпе 3-мĕш номерлĕ гимназисем, Заволжскри вăтам шкул), педагогика колледжĕ, Çĕмĕрле районĕнчи Краснооктябрьски вăтам шкулĕ, Хутарти гимнази. Çав проектсем хушшинче чи хăйне евĕрлине палăртар: ку вăл – Шупашкарти 61-мĕш номерлĕ вăтам шкул тăратнă «Шкулти прачечнăй» проект. Кунта инвалидсемпе ветерансене кĕпе-йĕм çуса парса пулăшассине йĕркеленĕ, çак ырă ĕçе кунта малалла та тăсасшăн.

Обществăлла организацисем те конкурссене активлă хутшăнаççĕ. Вăрçă тата çар службин ветеранĕсене пĕрлештерсе тăракан Чăваш Республикинчи обществăлла организацийĕ, политика репрессине пула шар курнисен ассоциацийĕ, Çĕнĕ Шупашкарти инвалидсен обществи иртнĕ çул та çĕнтерӳçĕсен йышне кĕнĕччĕ. «Муниципалсен» хушшинче Шупашкарти ачасен Чуковскипе Гайдар ячĕллĕ библиотекăсем, Маяковский ячĕллĕ библиотека, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи тĕп библиотека пур. Çавăн пекех Комсомольски район администрацийĕн культура пайĕ, халăхăн социаллă ыйтăвĕсене тивĕçтерекен центрсем, территорири хăйтытăмлăхăн обществăлла канашĕсем те пур.

Çӳлерех асăннă Канаш районĕнчи Асхва ял тăрăхĕ кăçал тепĕр икĕ проект тăратрĕ, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи икĕ ял тăрăхĕнчен ярса панă проектсем те гранта тивĕçме пултараççĕ.

Чапаев ячĕллĕ производство пĕрлешвĕ те интереслĕ заявка тăратнă. «Чапаевецсен» «Заводăн нумай тиражпа тухакан хаçачĕ – ветерансемшĕн бальзам» ятлă проекчĕ пенсионерсене активлă пурнăçпа пурăнма чĕнекенскер. Конкурса тăратнă ĕçсем хушшинче çамрăксене патриотла воспитани парас темăпа çырнисем пурри питĕ савăнтарать.

Конкурса тăратнă ĕçсем хушшинче ахаль çынсен социаллă проекчĕсем уйрăмах нумай кăçал. Ку вăл конкурсăн тĕп тĕллевĕ пурнăçланнине палăртакан ен, обществăлла пуçарулăха тĕрев панипе танах. Конкурссене хутшăнма кăмăл тунисен хушшинче ытларахăшĕ Пăрачкав районĕн çыннисем. Вĕсем тăратнă социаллă проектсен ячĕсемех вĕсен ĕçĕсен содержанийĕсене уçса пама тивĕç.

Çакна аса илтерсе хăварар: заявкăсене тăратмалли вăхăт вĕçленсе пырать. «Пирĕн хула», «Пирĕн атте-анне» конкурссене тăратнă социаллă проектсене регион шайĕнче пăхса тухмалли тапхăр паллă ĕнтĕ, вĕсене юпа уйăхĕн вĕçĕпе чӳк уйăхĕн пуçламăшĕнчи тапхăрта пĕтĕмлетĕç. Чӳк уйăхĕн 14-мĕшĕнче вара федераци шайĕнче мала тухнисене Мускавра чыслĕç.

ПАЯНХИ КУН ТЕМИ

# ХĔЛ ÇИРĔП ЫЙТАТЬ

Ял хуçалăх отраслĕнчи ăнăçу ытларах чухне ăна тухăçлă тытса пыма пĕлнипе çыхăннă. Кунта вара ĕнесене тĕрĕс-тĕкел пăхса усрасси те, витесенче тивĕçлĕ микроклимат тăвасси те кĕреççĕ. Выльăх-чĕрлĕх темĕнле ăратлă пулас пулсассăн та, çӳлерех илсе кăтартнă условисем çук тăк, фермăсем пысăк тухăç парасси пирки шухăшлани те кăлăхах. Çавна пула хуçалăхсем калама çук йышлă тăкак кураççĕ. Паллах, çакăн сăлтавĕсем кунтан кăна килмеççĕ-ха ĕнтĕ, выльăх-чĕрлĕх пăхас ĕç отрасльне малалла аталантарас ĕçре ытти ыйтусене те кун йĕркинчех тытма тивет, анчах та пĕтĕмĕшле ларутăру ытларах чухне шăпах çавăнпа çыхăннă та. Пурте пĕлекен чăнлăх пирки тепĕр хут сăмах хускатнăран вулакан каçартăрах ку йĕркесен авторне. Выльăх-чĕрлĕх витисене хĕле хатĕрлессипе çыхăннă ыйту пĕлтерĕшĕ те анлă. Ăна тĕпе хурса ĕçлени кирлĕ те çак кунсенче. Район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕ йĕркеленĕ ятарлă комисси иртнĕ уйăхра районти хуçалăхсемпе кооперативсенче пулса, фермăсене яваплă тапхăра мĕнлерех хатĕрленнипе интересленчĕ. Ушкăнра пай пуçлăхĕ Н. П. Чугаров, пайăн ертсе пыракан специалисчĕ А. И. Иванова, «Выльăх-чĕрлĕх чирĕсемпе кĕрешекен Йĕпреç районĕнчи станци» патшалăх учрежденийĕн пуçлăхĕн çумĕ Г. Л. Тихонова, ăратлăх енĕпе ĕçлекен «Чувашское» АУОн инспекторĕ Л. Е. Егорова пулчĕç. Манăн ĕç сĕтелĕ çинче çав комисси членĕсем алă пуснă актсем выртаççĕ. Ку материала вĕсем тăрăх хатĕрлерĕмĕр.

... Хĕвеллĕ кунсем тăнă чухне çанталăк япăх енне улшăнасси çинчен шухăшлас та килмест. Сывлăшра «шурă шăнасем» вĕçме тытăнас вăхăт кăçал килмест те тейĕн. Ку корреспонденци авторĕ кăна мар, чылай ял хуçалăх предприятийĕсен ертӳçисем те хальлĕхе çав шухăш «тыткăнĕнчех» çӳреççĕ-ха. Ку вара сăмаха ĕçе каçарассине чарса, чăрмантарса тăрать...

Выльăх-чĕрлĕх фермисенче пуринче те пĕрешкел ӳкерчĕкех иккен: витесем япăх лару-тăрура; вĕсене юсама пуçăнман, ятарлă звеносем туман; ку ыйтăва правленисен ларăвĕсенче сӳтсе явман; апатăн çирĕп никĕсĕ çук; т. ыт. те.

Комисси членĕсем «Заря» хуçалăхра ытти çĕртинчен маларах пулнă. Актри йĕркесемпе паллашатпăр: «Ĕне витинче юсав ĕçĕсем пуçланнă, хăвăртлăхĕ вара тивĕçлĕ шайра мар. Кантăкĕсем яриех уçă, вите тăрринчен шыв анать. Тислĕке алăпа тасатаççĕ».

Ку хуçалăхра хĕллехи тапхăра хатĕрленессине япăхах йĕркеленĕ теме çук. Такамсем килсе пулăшасса кĕтсе ларман кунта. Хĕвеллĕ кунсенчех хĕл пирки аса илнĕ. Çĕрĕшнĕ урай хăмисене çĕннисемпе улăштарнă. Çамрăк пăрусен уйрăмĕнче те юсав ĕçĕсене пурнăçланă. Хĕллехи рацион шĕвĕ пулмасси те иккĕлентермест. Хуçалăхра çу кунĕсенче 140 т утă, 500 т силос хывнă. Колхоз ертӳçи В. А. Тарасов пĕлтернĕ тăрăх, 2007 çулхи юпа уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне кашни ĕне пуçне 20 центнер (апат единици çине куçарса) апат хатĕрленĕ. Ăна малалла пуянлатмалли саппас пĕтмен-ха.

«Трудовикра» вара апат чи сахал хатĕрленĕ, пĕтĕмпе те 7 центнер кăна. Витесем те хатĕр мар. Вĕсем тислĕкпе, ăпăр-тапăрпа тулса ларнă. Санитарипе гигиена шайĕ пирки калаçни вырăнсăр кун пек чухне. Мăйракаллă ĕне выльăхсемпе сыснасене хупмалли витесене халех юсама тытăнмалла та. «Фермăра мĕншĕн санитари кунне ирттерместĕр?» – комисси членĕсем çав ыйтăва лартнă хуçалăх ертӳçисен умне, хăйсем актра пĕр çитменлĕх хыççăн теприне илсе кăтартнă: чылай çĕрте вите тăрринчен çумăр анать; ĕнесем тăракан вырăнти урай хăмисене юсаса тӳрлетмен; чӳрече кантăкĕсенчен çил шăхăрса вĕрет; витене пырса кĕнĕ çĕрте дезбарьерсем вырнаçтарман».

Çавăн пек çитменлĕхсенех асăрханă комисси членĕсем «Путиловка», Киров ячĕллĕ, «Красный фронтовик», «Искра» хуçалăхсенче.

Ильич ячĕллĕ колхоза ытти чухне пур енĕпе те ырăпа асăнаттăмăр мар-и? Кăçал Чăваштимешсем васкаманни сисĕнет. Ку тарана çитсе те фермăсенче пуртă-пăчкă сасси илтĕнмест. Акă пĕрремĕш номерлĕ витене тĕпрен юсани кирлĕ. Çуртсене дезинфекци тунă, стенисене темшĕн сăрламан. «Ĕç вăйĕ çителĕксĕртерех, – ӳпкелешет хуçалăх ертӳçи П. В. Чугаров. – «Иккĕмĕш çăкăра» пуçтарса кĕртсенех, фермăсене хĕле хатĕрлессипе ĕçлеме пуçлатпăр».

Калинин ячĕллĕ ЯХПКра та комисси членĕсен умне çакнашкал ӳкерчĕкех тухса тăнă. Фермăсенче юсав ĕçĕсене тытăнман. Выльăхсене шăварса тăмалли установкăсем юсавсăр.

«Çамрăк пăрусене хупмалли çуртра йĕрке çук. Урай хăмисем çĕрĕшнĕ, вĕсене улăштармалла. Автопоилкăсем ĕçлемеççĕ», – вулатпăр тепĕр актри йĕркесене. Анчах та çырни «Красный партизан» колхоз пирки пынине, ахăртнех, ăнланса илеймĕ вулакан, мĕншĕн тесен пучинкесем ытти çулсенче ку енĕпе ырă тĕслĕх кăтартнипе палăрнă. Юсав звени те ăнăçлă ĕçлетчĕ кунта. Кăçал ăна те туман, те вăл, вăхăт çитменнипе, фермăсене çитсе тухайман?

«Патман» ЯПК выльăх-чĕрлĕх пăхакансем районти тупăшура шанчăклăнах пĕрремĕш вырăна тытса пыраççĕ. Вĕсем кашни ĕнерен сĕт сăвассипе кăçалхи 9 уйăхрах виçĕ пинлĕ чикĕ урлă каçнă. Шел, «Патманра» та хĕле хатĕрленес ыйтупа тимлени сисĕнмест-ха. Юсав ĕçĕсене тăсса янă. Автопоилкăсем ĕçлемеççĕ, выльăхсене апат хурса панă çĕрте тислĕк шĕвекĕпе шыв капланса тăрать. «Пур çитменлĕхсене те пĕтерĕпĕр, – комисси членĕсем асăрхаттарăвĕсене итлесе пĕтернĕ хыççăн çапла шантарса пĕлтерчĕ кооператив ертӳçи В. К. Никифоров. Ĕненес килет унăн сăмахĕсене. Вăл сăмаха ĕçпе тытма пултарнине пĕр хутчен кăна мар кăтартса панă ĕнтĕ.

«Ибресинская» агрофирма АУОнчи ферма ĕçченĕсен утăмĕсем те шанăça ӳстереççĕ-ха. Хальлĕхе кунта кашни выльăх валли 23 центнер тĕрлĕ йышши апат хатĕрленĕ. Темшĕн-çке ферма çуртне реконструкци тăвассине те, юсав ĕçĕсене те тăсса янă. Ĕне сумалли зал тума палăртни те хальлĕхе хут çинче кăна.

Юлашкинчен вырăссен паллă сăвăçин классикăллă йĕркисене илсе кăтартмасăр тӳсеймĕпĕр. «Тĕнче кĕрхи халпа сывларĕ, хĕвел сайра пăхма пуçларĕ», – çырнăччĕ вăл. Çав вăхăт çитетех. Таврана шур пĕркенчĕк витсе хурĕ, пирĕн çĕр çине хĕл ура ярса пусĕ. Халĕ те «ыйхăран вăранманнисенчен» вăл çирĕп ыйтĕ.

***Геннадий КУЗНЕЦОВ.***

САНĂН ÇЫННУСЕМ, РАЙОН



**Юпа уйăхĕнче шуçăм çутă та таса. Хĕвелтухăç енчи тӳпе хĕрри майĕпен-майĕпен çуталма тытăнать. Çутă ярăм сарăлнăçемĕн сарăлса пырать те, юлашкинчен, тин сунă сĕт тĕсне илнĕ хыççăн, каç сĕмне анăçалла хăваласа ярать. Кĕрхи ир илĕртӳлĕхне туяс тетĕн пулсан, кантăкран кăвак çут карăнсанах вырăн çинчен сиксе тăмалла. Çакна çирĕп пăхăнасси Йĕпреçри Владимир Федотович Павловăн тахçанах йăлара ĕнтĕ. «Çакăн пек вăхăтра чун-чĕрере те ырă, канăçлă. Эсĕ кун ăнăçлă иртессе шанатăн, сана кун каçипе мĕн кĕтсе тăрассине пĕлни кирлĕ те мар, чи кирли – эсĕ ĕçе тухăçлăн пурнăçлама вăйхал та, кăмăл-туйăм та пуррипе хавхаланни», – тет кун пирки Владимир Федотович.**

# ПУРНĂÇ КĔНЕКИ МАЛАЛЛА ÇЫРĂНАТЬ

Мĕншĕн-ха вăл кĕр кунне ытларах кăмăллать? Ара, хăй çав вăхăтра çут тĕнчене килнĕрен! Халĕ вара, çил çемĕ каланăçемĕн, сарăлнă çулçăсем чăштăртатнăçемĕн ăна хăй ку таранччен пурăнса ирттернĕ кун-çул кĕнекине уçса «вулама» питех те меллĕ. Паллах, унăн страницисене киленӳллĕн вулаймастăн ĕнтĕ.

Шап-шурă хӳме пек тăрать
сар вăрман,
Кĕр сывлăшĕ уçă, таса.
«Тăванăм, пĕрне те ан ман
эс, ан ман!» –
Ӳкеç çулçăсем çаврăнса.

Пахчасенче çĕрулми аврине çунтараççĕ. Çил шурă йӳçек тĕтĕме уялалла хăвалать. Мĕншĕн-ха кĕркунне тĕтĕм ытла та йӳçĕ? Ку ыйтăва Владимир Федотович çапларах хуравларĕ: «Çĕрĕн пылак шерпечĕ çимĕççене куçнă, çил вара мĕн юлнине, йӳççине тавралла салатать».

Унăн шухăшĕпе килĕшмесĕр тăма çук. Тепĕр тесен, манăн шухăш та унăн «философийĕпе» пĕрешкелех.

Пирĕнтен вăхăт çав тери хыттăн «тарни» кăна кăмăла пăшăрхантарать. Владимир Павлов та çитмĕле çитрĕ ав. Ĕненес те килмест. Анчах та ку пулăмран иртсе кайма çук. Татьяна Павловнăпа Федот Николаевич Павловсен çемйинче çуралнă çиччĕмĕш ача пулнă вăл. Авăн уйăхĕнче килнĕ çут тĕнчене, анчах та ашшĕпе амăшĕ ывăлĕ çуралнине çирĕплетекен ĕнентерӳ хутне Пукрав кунĕнче тин илнĕ. Ку вăл 1937 çулхи юпа уйăхĕн 14-мĕшĕнче пулнă. Ачалăхĕ Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин çулĕсемпе тĕл килнĕ унăн. Хăрушă вăрçă хăйĕн йĕрне хăварнах çирĕплленсе çитмен черченкĕ чунра, анчах кăмăла хуçайман. Ĕçчен те чăтăмлă пулса ӳснĕ ача. Лайăх вĕреннĕ, кил-хуçалăхра аслисене пулăшнă. Йĕпреç ялĕнче Павловсенни пек туслă та килĕшӳллĕ çемье тек пулман та. Йĕпреçри пĕрремĕш номерлĕ вăтам шкула вĕренсе пĕтернĕ хыççăнах Владимир Павловăн салтака кайма ят тухнă. Виçĕ çултан И. Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институчĕн художествăпа графика факультетне кайса кĕнĕ. 1961 çулта, диплом илсен, пĕчĕк тăван çĕршывне таврăннă. Вăл Черноречкăри çакăр çул вĕренмелли, Йĕпреçри пĕрремĕш номерлĕ вăтам шкулсенче ачасене рисовани тата черчени предмечĕсене вĕрентнĕ, кайран районти Пионерсен çурчĕн директорĕн тивĕçне пурнăçланă. Педагогика çулйĕрĕ çинчен пăрăнса Йĕпреçри çул-йĕр управленийĕнче художник ĕçне кӳлĕнме мĕн хистенĕ ăна? Кун пирки тĕпĕ-йĕрĕпе тĕпчесе тăрас шухăшпа хĕртĕнместĕп эпĕ. Владимир Павлов асăннă управленире хăйĕн тивĕçне чыслăн туса пынă. Унăн алли çул хĕрринчи плакатсене çĕнĕ сăн панă, ӳнерçĕ плакатсемпе лозунгсем çырнă. Киле таврăнсассăн, Владимир Федотович мольберт умне тăнă, ăшри туйăмĕсене пейзажсенче уçса пама тăрăшнă. Тăван тăрăхăн илĕртӳллĕ илемне сăнлама уйрăмах юратнă вăл. Унăн килĕнче çавăн пек ĕççем шутсăр йышлă, анчах та вĕсене авторĕ куракансен умне кăларма темшĕн васкаман.

Владимир Федотовича вăтăр çул ытла пĕлетĕп ĕнтĕ. Унпа вăл Йĕпреçри халăх театрĕн художникĕнче ĕçлеме пуçланă тапхăрта паллашнăччĕ. Режиссер сĕнĕвĕпе театр лартакан спектакльсем валли художник декорацисем хатĕрленĕ. Ку ĕçпе кăна çырлахман, рольсене калăплама та шаннă ăна. Артист ăсталăхĕ пысăк унăн. Владимир Федотовичăн тепĕр ăсталăхĕ умĕнчен те иртсе каймăпăр: вăл халăх юррисене шăрантарма юратать. Кăкăртан çĕкленсе тухакан хăватлă сасăпа еплерех юрлать вĕсене! Юбиляр мĕн паянччenех Йĕпреçри халăх хорне те, ветерансен хорне те кăмăлласа çӳрет. Юрăçă ĕççыннисене чăннипех пысăк савăнăç-хавхалану кӳрет, çавăншăн ăна ватти-вĕтти таранах тав тăваççĕ. Кашни çулах, Çĕнĕ çул çитеспе Владимир Федотович Хĕл мучин кĕрĕкне тăхăнать те, шкулсене, ача сачĕсене васкать, пĕчĕккисене хăйĕн миххинчи тутлă кучченеççемпе сăйлать...

Юбилярăн кăмăл туртăмĕ тĕрлĕ енлĕ пулнине вулакан тавçăрса илчĕ ĕнтĕ. Тата тепĕр ăсталăх панă ăна çутçанталăк. Павлов – тематикăллă сăмахкаçмăшсене ăста туса хатĕрлеме пултаракан çын. Унăн ĕçĕсене республикăри кăларăмсенче, районти «Çĕнтерӳшĕн» хаçатра тăтăшах кун çути кăтартаççĕ.

Владимир Федотовичпа Тамара Ивановна (мăшăрĕ Чăваш ял хуçалăх институтĕнчен вĕренсе тухнă) виçĕ ача пăхса ӳстернĕ. Аслă хĕрĕ, Наталия, суту-илӳре тăрăшать. Кĕçĕн ывăлĕ, Эдуард ашшĕ çулĕпех кайнă, вăл – ӳнерçĕ, йывăçран кассе темĕнтепĕр ăсталама пултарать. Вăталăххи, Станислав, контракт йĕркипе Чечняна кайнăччĕ. Ултă çул каялла вăл паттăррăн пуç хучĕ...

... Кĕрхи çил чăштăртаттарнă, сарални çулçăсем çĕре вĕççе ӳкнĕ вăхăтра Владимир Федотович «утса тухнă» çул кĕнекине уçса вулать. Малта вара – çĕнĕ çул, çĕнĕ страницăсем, çĕнĕ тĕллевсем, çĕнĕ ĕççем. Юбиляра пултарулăхра çĕнĕ ӳсĕмсем тума çирĕп сывлăх сунатпăр. Вăй патăр, тус-тăванăмăр!

***Геннадий КУЗНЕЦОВ.***

**ӲКЕРЧĔКРЕ:** *В. Ф. Павлов.*

САВĂ СĔВЕМĔ

## МĂНТТАЙ

Калама та лайăх мар, туссемĕр,
Манăн кӳршĕре пурнать мăнттай.
Шӳт тесе ан шутлăр, ĕненсемĕр:
Пурнăçра пулать çав тăрпалтай.
Курпунне кăларнă, мучи майлă,
Аллине вăл тытнă мăн туя.
Ачаран пĕлетĕп ăна лайăх:
Уншăн пулнă ĕçкĕ мăн уяв.
– Чим-ха, тетĕп, чим, сана мĕн пулнă?
Начарланнă, калăн, шур хăва
– Ан калаç-ха, тет вăл, – ларса тулнă
Пĕверте – чулсем, шăмра – тăвар.
Тухтăрсем мана çапла каларĕç, –
Терĕ кӳршĕм. (Унăн ячĕ – Тит) –
Сехрене хăпартрĕç, чаплă мар ĕç:
– Хĕрĕхе çитмен, эп – инвалид ...
Ĕçкĕ-çикĕ уншăн тулăх пулнă,
Вăл тарса çӳретчĕ ĕç тесен.
Вăйăра вылянă шуххăн, кулнă.
Халь ларать, курсамăр, пĕр-пĕччен.
Ăш сăмах тупса эп калаймарăм,
Çиллĕм ман хăпарчĕ курсанах,
Хам тарăхăва пытараймарăм:
«Кутăн, – терĕм, – эсĕ чăн-чăнах».
Пытармасăрах, туссем, калар-и:
«Ĕçкĕпе кирлех-ши мухтанма?»
– Пирĕн, авă, тухнă тар тăварĕ
Аçлăк витĕр çамрăк çурăма.
Çамрăк халлăн, вирлĕн авăн çапнă
Тырă вырнă, тăкнă çутă тар.
Харсăр чĕресем канмасăр тапнă:
Ĕç вăл пулнă ырлăх, пархатар.

***Василий ЧЕРНОВ.***

ПОЗДРАВЛЯЕМ

самого дорогого человека на этом свете – мужа, отца и дедушку – **ПАВЛОВА Владимира Федотовича**, проживающего в поселке Ибреси, с замечательным юбилеем – 70-летием, желаем счастья, удачи, любви, согласия, солнца, улыбок, радости, успеха.

Мы хотим пожелать
только самую малость,
Чтоб жить на свете
Тебе лет 200 осталось.
Чтоб работали руки
и кипела бы сила.
Чтоб и этого срока
Тебе не хватило.

***ЖЕНА, ДЕТИ, ВНУКИ.***

САЛАМЛАТПĂР

Кам калатăр ăна 70 çула çитнĕ тесе? Çамрăк чухнехиллех вашават та маттур çӳрет, сцена çинче халăх театрĕпе пĕрле яш каччăсен ролĕсене те вылять пирĕн хаклă тăванăмăр, пичче, кукка – Йĕпреç поселокĕн чи активлă ветеранĕсенчен пĕри – **Владимир Федотович ПАВЛОВ**. Кĕр мăнтăрĕпе пуян та тулăх кĕреке хушшине ларса эпир ăна Пукрав ăшшипе пĕрле килекен юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Вăрăм ĕмĕр, тивлетлĕ кун-çул сунатпăр.

Çул хыççăн çул иртет, çапах та
Эс ан васка-ха ватăлма.
Кун пек юбилейсенче татах та
Йышпа эс тивĕç савăнма.
Телейлĕ пул, тăванăмăр, ан чирле, вăрăм ĕмĕр ĕмĕрле!

***Мĕнпур тăванĕсем ячĕпе – БЫКОВСЕН ÇЕМЙИСЕМ.***

НАШИ КОНСУЛЬТАЦИИ

# ОБ ИЗМЕНЕНИЯХ В НАЛОГОВОМ КОДЕКСЕ

**Какие изменения были внесены в гл. 23 НК РФ с 01 января 2008 года? На этот и другие вопросы, связанные с налогооблажением отвечает исполняющая обязанности начальника отдела выездных проверок Межрайонной инспекции ФНС России №3 по Чувашской Республике СОФРОНОВА Надежда Михайловна.**

**- Как будет облагаться натуральная оплата по налогу на доходы с физических лиц с 01.01.2008г.?**

Федеральным Законом №216- ФЗ от 24.07.2007г. внесено уточнение в порядок определения налоговой базы по доходам, полученным в натуральной форме, согласно которой к доходам в натуральной форме будут относиться товары, работы, услуги, полученные физическим лицом частичной оплатой. В этом случае при расчете налоговой базы по НДФЛ рыночная стоимость товаров, работ, услуг, полученных физическим лицом, уменьшается на сумму, оплаченную им (поправка внесена в абзац второй п.1 ст.211 НК РФ).

**– Какой порядок обложения НДФЛ от дохода в виде материальной выгоды?**

В настоящее время доходы в виде материальной выгоды от экономии на процентах облагается НДФЛ по ставке 35% (п.2 ст.224 НК РФ). Исключением из установленного правила являются доходы в виде материальной выгоды, полученной от экономии на процентах за пользования целевыми займами (кредитами). Речь идет о тех заемных средствах, которые налогоплательщик получил и фактически израсходовал на строительство или приобретение на территории РФ жилого дома, квартиры или долей в них.

Если налогоплательщик документально подтвердил целевое использование заемных средств, то НДФЛ с материальной выгоды от экономии на процентах за пользование целевыми займами удерживается по ставке 13%.

Начиная с 1 января 2008г. материальная выгода от экономии на процентах по заемным средствам, израсходованным на строительство или приобретение домов и квартир, не будет включаться в налоговую базу по НДФЛ. Кроме того, не будет облагаться НДФЛ и материальная выгода от экономии на процентах по заемным средствам, израсходованным на приобретение комнат, но только при условии, что физическое лицо имеет право на получение имущественного вычета на строительство или приобретение жилья. (изменения внесены в пп.1 п.1 ст.212 и п.2 ст.224 НК РФ)

**- Будут ли включаться в налогооблагаемый доход физического лица проценты по рублевым вкладам?**

С 1 января 2008г. в налогооблагаемый доход физического лица не будут включаться проценты по рублевым вкладам, которые на дату заключения или продления договора были установлены в размере, не превышающим действующей ставки рефинансирования Банка России, но только при соблюдении следующих условий:

- в течение периода начисления процентов размер процентов по вкладу не повышался;

- с момента, когда процентная ставка по рублевому вкладу превысила ставку рефинансирования Банка России, прошло не более трех лет.

**- Будут ли облагаться НДФЛ суммы материальной помощи, которые выплачиваются налогоплательщикам, пострадавшим от стихийных бедствий или других чрезвычайных обстоятельств и налогоплательщикам – членам семей лиц, погибших в результате подобных ситуаций?**

С 1 января 2008г. не будет облагаться НДФЛ суммы материальной помощи, которые выплачиваются не только налогоплательщикам, пострадавшим от стихийных бедствий или других чрезвычайных обстоятельств, но и налогоплательщикам – членам семей лиц, погибших в результате подобных ситуаций.

**- Освобождаются ли от налогообложения НДФЛ суммы полной или частичной компенсации (оплаты) стоимости путевок, которые приобретены бывшим своим работникам, уволившимся в связи с выходом на пенсию по инвалидности или старости.**

С 1 января 2008г. будет освобождаться от налогообложения суммы полной или частичной компенсации (оплаты) стоимости путевок, которые приобретены бывшим своим работникам, уволившимся в связи с выходом на пенсию по инвалидности или старости.

**- Будут ли облагаться НДФЛ суммы, полученные налогоплательщиками на возмещение затрат, на уплату процентов по займам (кредитам)?**

Начиная с 1 января 2008г. не будет облагаться НДФЛ суммы, полученные налогоплательщиками на возмещение затрат (части затрат), на уплату процентов по займам (кредитам) (п.35 ст.217 НК РФ), а также суммы субсидий на приобретение и (или) строительство жилого помещения (п.36 ст.217 НК РФ). Однако эти суммы не будут облагаться только при условии, что они выплачены за счет средств федерального бюджета, бюджетов субъектов Российской Федерации и местных бюджетов.

**- В каком размере будет предоставляться социальный вычет с 2008г.?**

С 01 января 2008г. устанавливается единое максимальное ограничение суммы социальных налоговых вычетов в связи с расходами на обучение самого налогоплательщика, на лечение и на расходы по договорам негосударственного пенсионного обеспечения, добровольного пенсионного страхования в размере 100000 руб.

**- Облагаются ли НДФЛ доходы, полученные в порядке наследования и дарения?**

С 1 января 2008 г. устанавливается обязанность налогоплательщиков, получающих доходы в порядке наследования и дарения, декларировать их и уплачивать НДФЛ. К ним относятся:

- наследники (правопреемники) авторов произведений науки, литературы, искусства, а также авторов изобретений, полезных моделей и промышленных образцов (пп.6 п.1 ст.228 НК РФ);

- физических лиц, получающих доходы в денежной и натуральной форме в порядке дарения, за исключением случаев, предусмотренных п.18.1 ст.217 НК РФ (пп.7 п.1 ст.228 НК РФ).

Более подробными разъяснениями можете обращаться в Межрайонную инспекцию ФНС России №3 по Чувашской Республике.

## КОНКУРС СОЦИАЛЬНЫХ ПРОЕКТОВ

Министерство здравоохранения и социального развития Чувашской Республики напоминает руководителям организаций, добившихся успеха в реализации социальных программ, о продлении срока представления документов для участия в VII Всероссийском конкурсе «Российская организация высокой социальной эффективности».

Приглашаются все организации, зарегистрированные в Российской Федерации, независимо от форм собственности и отраслевой принадлежности. По решению Организационного комитета по подготовке и проведению Всероссийского конкурса «Российская организация высокой социальной эффективности» сроки приема документов продлены до 20 октября 2007 года.

Практика проведения конкурса свидетельствует о его широкой популярности среди организаций, поддержке идеи конкурса со стороны органов власти всех уровней. Конкурс позволяет выявить лучшие социальные проекты предприятий и организаций, способствует созданию позитивного социального имиджа многих российских организаций.

Для получения консультаций необходимо обратиться в отдел социальной защиты населения Ибресинского района Чувашской Республики Минздравсоцразвития Чувашии.

Торжественная церемония подведения итогов и награждения победителей VII Всероссийского конкурса «Российская организация высокой социальной эффективности» состоится 12 февраля 2008 года в Государственном Кремлевском дворце.

**Отдел социальной защиты населения Ибресинского района Чувашской Республики Минздравсоцразвития Чувашии.**

## ПЬЕДЕСТАЛ ÇИНЧЕ – ÇАМРĂК БОКСЕРСЕМ

Юпа уйăхĕн пуçламăшĕнче Çĕмĕрлере çак хулара уçăлнă бокс секцийĕн черетлĕ «çуралнă кунне» халалласа республика турнирĕ иртрĕ. Вăл йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. Унта кăçал Йĕпреç поселокĕнчи çамрăк боксерсем те хутшăнчĕç. Хăйсен виçисенче О. Медведевпа А. Гурьев тата Е. Осипов (пурте пĕрремĕш номерлĕ вăтам шкулта пĕлӳ илеççĕ) пьедесталăн иккĕмĕш картлашки çине улăçма тивĕçнĕ. Çамрăксем виççĕшĕ те Йĕпреçри Ачасен пултарулăх çурчĕн бокс секцине çӳреççĕ.

***В. ВАСИЛЬЕВ.***

## ПОЗДРАВЛЯЕМ

Дорогую сваху – **ГРИГОРЬЕВУ Раису Григорьевну**, проживающую в поселке Ибреси, – с замечательным юбилеем – 50-летием!

Пусть в сердце молодость не гаснет,
А вместе с ней тепло и доброта,
Пусть вечным гостем в доме будет счастье,
Покой, уют, тепло и красота.
Желаем, чтоб здоровья было много,
Чтоб радость верной спутницей была,
И чтоб всегда на жизненной дороге
Хватало любви, нежности и тепла.

***С уважением ДАНИЛОВЫ.***

## САЛАМЛАТПĂР

Эйпеç ялĕнче пурăнакан ĕçчен те тараватлă çыннăмăра, юратнă аннене, кукамая, асаннене, хунямана – **Лидия Дмитриевна ЖУРАВЛЕВАНА** – кĕр мăнтăрĕпе, Пукрав уявĕпе тĕл килекен çуралнă кунĕ ячĕпе ăшшăн саламлатпăр. Хаклă çыннăмăр кăçал 68 çул тултарать. Эпир ăна тепĕр çавăн чухлĕ çул пурăнма çирĕп сывлăх, çĕнĕ вăй-хал, хавхаланулла кăмăл-туйăм, тивлетлĕ те çутă ăраскаллă кун-çул сунатпăр.

Сан ыран çуралнă кун, тăванăм,
Кĕреке саккийĕ туп-тулли.
Манăçтăр хуйху-суйху йăлт санăн,
Çиçтĕр сăн-питре телей кулли.

***ХĔРĔСЕМПЕ ЫВĂЛĔСЕМ, КĔРӲШĔСЕМПЕ КИНĔСЕМ, МĂНУКĔСЕМ.***

x x x

Чĕвĕлти чĕкеç пек çепĕç кăмăллă, ырă чунчĕреллĕ çыннăмăра, çывăх та хаклă тăванăмăра – пĕртен пĕр хĕрĕмĕре, юратнă аппамăра, йăмăкăмăра – Йĕпреç райповĕнче чылай çул яваплă должноçра ĕçлекен **Галина Васильевна КУЗЮКОВАНА** – пĕтĕм чун-чĕререн тухакан чи ăшă сăмахсемпе çуралнă кун ячĕпе саламлатпăр. Ырлăх-сывлăх, вăрăм кун-çул, телейлĕ пурнăç сунатпăр.

Пурăн пĕртте ватăлмасăр,
Ыррăн-сыввăн та таса
Ăраскал сунатпăр эпĕр,
Чунтанах сана савса.
Пул ялан хавас та ырă,
Ан пĕлсем чир-чĕр мĕнне.
Чунупа пул ĕмĕр çамрăк,
Телейпе пĕрле çӳре.

***АШШĔПЕ АМĂШĔ, ПИЧЧĔШĔСЕМПЕ ШĂЛЛĔСЕМ, ИНКĔШĔСЕМПЕ КИНĔСЕМ, ВĔСЕН АЧИСЕМ.***

## ВЫРАЖАЕМ

благодарность коллективу Южных электрических сетей, Ибресинской РЭС и лично Дмитриеву Василию Федоровичу за оказанную помощь в организации похорон отца Краснова Петра Ивановича.

***Дочери ИРИНА, СВЕТЛАНА.***

ВНИМАНИЕ, КОНКУРС!

## АДМИНИСТРАЦИЯ ИБРЕСИНСКОГО РАЙОНА

сообщает, что согласно постановлению Кабинета Министров Чувашской Республики от 14.09.2007 года №234 «Об утверждении Порядка предоставления грантов начинающим субъектам малого предпринимательства на создание собственного бизнеса», Министерством экономического развития и торговли ЧР объявлен конкурс на получение гранта до одного миллиона рублей.

Начинающим субъектом малого предпринимательства в целях реализации настоящего Порядка признается коммерческая организация или индивидуальный предприниматель, соответствующие условиям, определенным законодательством Российской Федерации в сфере развития малого предпринимательства, с даты регистрации которых в качестве коммерческой организации или индивидуального предпринимателя на момент обращения за поддержкой прошло не более двух календарных лет.

Начинающий предприниматель, претендующий на получение государственной поддержки в форме гранта, представляет в Минэкономразвития Чувашии для рассмотрения конкурсной комиссией:

- заявку утвержденной формы;
- бизнес-план утвержденной формы;
- другие документы по перечню.

Заявки принимаются до 25 октября 2007 года.

Подробнее о предоставлении грантов начинающим субъектам малого предпринимательства на создание собственного бизнеса можно получить в администрации района в отделе экономики и управления имуществом (каб.307) или по тел.:2-25-71.

**764. СРОЧНО ПРОДАЕТСЯ квартира приватиз. по ул. Кооперативная, 31, кв. 32, гор. вода. Цена договорная. Тел.: 89061320969, 89278571284, 2-29-18.** 2-1

**ТОЛЬКО 18 ОКТЯБРЯ с 9 до 13 часов ДОРОГО ЗАКУПАЕМ ВОЛОСЫ. Оплата зависит от длины и веса. Обр. в Дом быта, 2-й этаж.**

**МОУ ДО «ДОМ ДЕТСКОГО ТВОРЧЕСТВА» ИБРЕСИНСКОГО РАЙОНА ЧР**
**объявляет дополнительный набор учащихся на 2007-2008 учебный год в кружки по следующим направлениям:**

- художественно-эстетическое,
- физкультурно-спортивное,
- техническое,
- эколого-биологическое,
- социально-педагогическое,
- декоративно-прикладное,
- театральное,
- краеведческое.

**Занятия проходят в ДДТ, обучение бесплатное. Адрес: п. Ибреси, ул. Комсомольская, д. 23. Телефон для справок: 2-32-19.**

**768. ПРОДАЮ 3-х комн. квартиру в центре поселка Ибреси. Тел.: 89061339827.**

**766. ПРОДАЮ шифер, цемент, кирпичи, керамзит, гравмассу. Телефон: 2-21-40, 89088503546.** 5-1

**Выражаем глубокое соболезнование воспитателю детского сада «Весна» Хормалинского сельского поселения Николаевой Нине Ильиничне по поводу преждевременной смерти ее брата АЛЕКСЕЯ.**

***КОЛЛЕГИ.***

Ответственность за подробность и точность фактов и прочих сведений, опубликованных в газете, несут авторы. Редакция может публиковать статьи в порядке обсуждения, не разделяя точку зрения автора.

*Главный редактор АЛИМАСОВ К. Д.*

Çĕнтерӳшĕн (За победу)

Учредитель: Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела ЧР

Адрес РГУ «Редакция Ибресинской райгазеты «За победу»: 429700, п. Ибреси, ул. Садовая, д. 6

ТЕЛЕФОНЫ: главный редактор — 2-11-92, ответственный секретарь — 2-11-93, отдел сельской жизни — 2-11-95, отдел по дубляжу — 2-11-96, бухгалтерия, стол заказов — 2-11-97. АДРЕС ГУП "Вурнарский издательский дом": 429220, п. Вурнары, пер. Коммунальный, 4. ТЕЛЕФОНЫ: 2-12-30, 2-19-40.

Газета зарегистрирована Приволжским окружным межрегиональным территориальным управлением Министерства РФ по делам печати, телерадиовещания и средств массовых коммуникаций 13 августа 2002 года. Регистрационный номер ПИ № 18-0918.

Номер набран и сверстан в компьютерном отделе редакции, отпечатан в ГУП "Вурнарский ИД". Индекс 54814. Офсетная печать. Объем 1,5 п. л. Тираж 3251 чув. – 2418, русск. – 873. Зак. №

Газета выходит два раза в неделю — по средам и субботам на чувашском и русском языках. Материалы на правах рекламы обозначены знаком Ⓟ
Срок сдачи в печать — 17.00
Сдан в печать в 10.00

Ответственный за выпуск Быкова С. В.